25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
ОКТЯБРЬ
21
ЮНКУН
246 (6181) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Спорт ĕçĕ вăрçă вăхăтĕнчи иккĕмĕш хĕл умĕн

Хĕрлĕ Çар валли ӳт-пӳ тĕлĕшĕнчен çирĕп те чăтăмлă боецсем хатĕрлес ĕçре физкультурăпа спорт питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Иртнĕ хĕллехи вăрçă операцийĕсем опычĕ çакна кăтартса пачĕ: малтан лайăх вĕрентсе хатĕрленĕ йĕлтĕрçĕсен отрячĕсем çапăçура пысăк çитĕнӳсем турĕç, вĕсем инçетри походсем туса, тăшманăн тылне шала кĕре-кĕре кайса, нимĕçсен фашистла войскисене нумай сиен кӳчĕç, Хĕрлĕ Çарăн наступленири пысăк задачисене пурнăçа кĕртнĕ çĕрте калама çук паха пулăшу пачĕç.

Отечественнăй вăрçăн иккĕмĕш хĕлĕ çывхарса килет. Вăл пирĕн умма çĕнĕ задачăсем лартать. Халĕ, тăвах çĕршыври мĕнпур фабрикăсемпе заводсем, колхозсем, мĕнпур ĕççыннисем фронта вăйлăнрах пулăшассишĕн пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçленĕ вăхăтра, пирĕн физкультурăпа спорт организацийĕсен те хăйсен пĕтĕм ĕçне фронт интересĕсене пăхăнтармалла.

Кунта чи малтан тата пуринчен ытларах йĕлтĕрçĕсем хатĕрлесси çине савăрăнса пăхас пулать. Предприятисемпе колхозсенче, учрежденисенче, аслă тата вăтам шкулсенче, всевобуч подразделенийĕсенче, спорт обществисенче йĕлтĕрçĕсен çĕнĕ отрячĕсене хатĕрлемелле. Йĕлтĕрçĕрен хальхи тапхăр йĕлтĕрпе лайăх çӳреме пĕлнине кăна мар, çар ĕçне те тĕплĕн пĕлнине ыйтать. Урăхла каласан, пирĕн йĕлтĕрçĕ-воин вĕрентсе хатĕрлес пулать.

Çакă вăл—вăрçă тĕлĕшĕнчи питех те пысăк ĕç. Ăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртес тесен, физкультура организацийĕсен, комсомолпа Осоавиахимăн тата профсоюзсен пĕр-пĕринпе таччăн çыхăнса ĕçлемелле. Анчах та çак çыхăнăва республикăри организацисем хушшинче курма çук-ха. Сăмахран, физкультурăпа спорт ĕçĕсен Чăваш АССР Совнаркомĕ çумĕнчи комитечĕн работникĕсем: комсомолпа профсоюзсем физкультура ĕçне пачах та пулăшмаççĕ, тесе ӳпкелешеççĕ. Комсомол работникĕсем вара—физкультура комитечĕ хăй япăх ĕçлет те айăпа ыттисем çине тӳнтерет, тесе калаççĕ. Профсоюз организацийĕсем те физкультурăпа спорт ĕçĕнчен аякра тăраççĕ. Çакăн пек пысăк та ответлă ĕçе пĕр-пĕрин çине тӳнтерме пăхни, пĕр-пĕрин хушшинче килĕшӳлĕх çукки вăл пĕрре те вырăнлă мар. Çакă вăл ĕçе сиен кӳме кăна пултарать.

Тӳрех калас пулать, республикăри спорт обществисем халĕ хăйсен ĕçĕсене питех те юхăнтарса янă. Вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем саланса каясси патнех çитнĕ, е саланса та кайнă. Чылай çĕрте спорт инвентарĕсене сапаласа пĕтернĕ. «Медик» тата «Динамо» обществисенче çу каçиччен йĕлтĕрсене кирлĕ пек пăхса усраман. Çавăн пек йĕркесĕрлĕхсене районсенче те чылай çĕрте курма пулать.

Комсомолецсемпе профсоюз членĕсенчен, физкультурăпа спорт ĕçĕн активĕнчен обществăллă инструкторсем хатĕрлессине тĕрĕссипе никам та çине тăрса ертсе пымасть. Халĕ акă ГТО енĕпе (чăрмавлă вырăнсем урлă шуса каçса çĕнтерессипе т. ыт. те) ăмăрту пулса иртрĕ. Ăна та кирлĕ пек организацилемен, ăмăртăва çамрăксене çителĕклĕ таран явăçтарман. Чăн та, çамрăксене физически воспитани парас ĕçре всевобуч енĕпе палăрмалла çитĕнӳсемех тунă. Анчах çакă вăл комсомолпа профсоюз, физкультурăпа спорт организацийĕсем спорт ĕçне япăхтарнин айăпне пĕрре те чакармасть.

Халĕ республикăри физкультурăпа спорт организацийĕсене йĕлтĕрçĕсем хатĕрлес тĕлĕшпе анлă программа панă. Пирĕн темиçе вуншар пин çынна йĕлтĕр çине тăратса ку енĕпе çирĕп хăнăхупамалла. Анчах çак ĕç халĕ уйрăм лĕпĕр профсоюз организацийĕсене цифрăсем валеçсе панинчен малах каяйман-ха.

Йĕлтĕрçĕсен пысăк çарне вĕрентсе хатĕрлеме обществăллă инструкторсем нумай кирлĕ пулаççĕ. Çавăнпа та йĕлтĕрçĕ-инструкторсене хатĕрлес ĕçе халех, пĕр кунлăха та кая хăвармасăр, тытăнмалла. Коопераци енĕпе ĕçлекен работниксен профсоюзĕн облаçри комитечĕ хăйĕн пур пек обществăллă инструкторĕсене шута илнĕ; кунта 51 инструктор çумне хушса тата 70 инструктор вĕрентме тытăнаççĕ. Çавăн пекех финанспа банк работникĕсен профсоюзĕ те ноябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 40 сехетлĕ программа тăрăх 39 инструктор хатĕрлеме тытăнать. Асăннă профсоюзсем вĕсен миçе йĕлтĕрçĕ, миçе команда, миçе отряд пулассине палăртаççĕ.

Çакă ыра шухăш хут çинче кăна тăрса ан юлтăр тесен, инструкторсен вĕренĕвне пур енчен те лайăх хатĕрленсе тытăнас пулать. Уйрăмах тата йĕлтĕр ĕçне вĕрентессине çар ĕçĕпе çыхăнтарса пыма кирлине манмалла мар.

Хулари предприятисемпе учрежденисенче спортăн хĕллехи сезонне хатĕрленес енĕпе хăшпĕр ĕççене тума тытăннă пулсан, колхозсенче тата ялти шкулсенче вара ку тĕлĕшпе халиччен нимĕн те туман тесен те тĕрĕс пулать. Колхоз çамрăкĕсемпе шкулсенче вĕренекенсем хăйсен хисепĕпе пирĕн республикăри мĕнпур çамрăксен йышĕн чи пысăк пайĕ пулса тăраççĕ. Çавăнпа та вĕсене спорт ĕçне ытларах явăçтармалла, колхоз çамрăкĕсенчен, шкулти çамрăксенчен ятарласа йĕлтĕрçĕсен командисем организацилемелле. Хăшпĕр шкулсенче физкультура инструкторĕсемпе çак ĕçе вĕрентекен преподавательсене аякран парассине кĕтсе лараççĕ. Ку йăлана халĕ пăрахмалла. Физкультура инструкторĕсене кашнин вырăнтах хатĕрлес пулать. Çавăн пекех кашни сывлăхлă учитель, уйрăмах çамрăк учитель, физкультурăпа вĕрентекен преподаватель пулма пултарать.

Спорт инвентарĕсем тĕлĕшпе, уйрăмах йĕлтĕрсем тĕлĕшпе, пирĕн ытлашши йывăрлăхсем пулма тивĕçлĕ мар. Республикăри нумай промартельсем халĕ йĕлтĕрсене массăллăн туса кăларма тытăнчĕç. Кунсăр пуçне тата эпир вăрманлă вырăнта пурăнатпăр. Тăрăшсан, кашни çын хăйне валли йĕлтĕр тума пултарать. Çавтери чаплах пулмасан та, çӳреме вĕренмелĕх йĕлтĕр тума пулатех.

Çапла ĕнтĕ, вăхăта усăсăр сая ямасăр, спортăн обществăллă инструкторĕсене хатĕрлес, йĕлтĕрçĕсен командисене, отрячĕсене тăвас, вĕсене валли командирсем уйăрса хурас, йĕлтĕрсемпе ытти инвентарьсене çителĕклĕ таран хатĕрлес, йĕлтĕр базисене йĕркене кĕртес ĕçе халех тытăнмалла. Пулас ăмăртусен, походсен планĕсене малтанах палăртса хумалла. Мĕнпур ĕçе çар ĕçне вĕренессипе таччăн çыхăнтармалла.

Çак ĕçре комсомол уйрăмах хăйĕн пуçарулăхне кăтартма тивĕçлĕ. Комсомол—физкультурăн чунĕпе чĕри пулса тăрать. Кунта комсомолпа физкультура организацийĕсем тата профсоюзсем хушшинчи турткалашăва пăрахăçа кăлармалла.

Партипе советăн вырăнти организацийĕсен те физкультурăпа спорт ĕçне йĕркелесе ярасси çине, уйрăмах çамрăксенчен çирĕп йĕлтĕрçĕсем—чăн-чăн воинсем пиçĕхтерсе çитĕнтерессипе çине тимлĕнрех çавăрăнса пăхас пулать. Çапла пурте пĕр шухăш-кăмăллă пулса ĕçлесе, эпир çакă оборонăллă пысăк та ответлă задачăна пурнăçа кĕртĕпĕр, Хĕрлĕ Çар валли çĕнĕрен пиншер боецсем, чаплă йĕлтĕрçĕсем вĕрентсе хатĕрлĕпĕр.

Хисеплĕ ĕçе кулленех туса пымалла

Ишлей районĕнче Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕç вăйлансах пырать. Çак кунсенче кăна районри комисси складне 431 тир, 200 килограмм çăм, 160 метр пир, 110 мулаххай, çăм атăсем тата ытти япаласем те нумай леçсе панă.

Ăшă тумтирсем пухас ĕçе Вăрман Çĕктер ялсоветĕнче аван организациленĕ. Ялсоветри колхозниксем çак кунсенче 46 килограмм çăм, 142 тир, 14 мулаххай, 8 мăшăр çăм алшиш, аялтан тăхăнмалли 4 кĕпе тата 2 минтер пичĕ панă. Ку ялсоветри «1-мае Мая» колхозра ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе ĕçлекен комисси председателĕ, туллимар вăтам шкулти учительница М. Федотова юлташ колхоз председателĕпе И. Хрисановпа пĕрле колхозниксем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçне аван туса пынă, çавăнпа ăшă тумтирсем пухасси те аван пырать. Кунта кашни колхозник хуçалăхĕ ăшă тумтирсем панă çĕре хутшăнчĕç. Вĕсем виçĕ кун хушшинче 26 тир, 11,5 килограмм çăм, 2 мăшăр алшиш, 8 мăшăр пир тăла, 6 алшăлли, пĕр çĕлĕк т. ыт. те пачĕç. Кунти «Париж Коммуни» колхоз членĕсем 38 тир, 9 килограмм çăм, 12 мулаххай, 5 мăшăр çăматă, 3 алшиш панă. Пухнă япаласене пурне те районри комисси складне леçнĕ

Шетмепуç ялсоветĕнче боецсем валли 62 тир, 75 килограмм çăм, 50 мулаххай пухса пачĕç.

Анчах та çав хушăрах ку ĕçе хакламан ялсоветсемпе колхозсем те пурха. Очăкасси, Энтимĕркасси тата Катраç ялсовечĕсене кĕрекен колхозсенчи комиссисем ăшă тумтирсем пухас тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Ку ялсоветсенче те ĕçе тивĕçлипе организацилемелле.

П. ЛУКИН.

* * *

Вăрмар районĕнчи колхозсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухас ĕçе хастарлăн туса пыраççĕ. Çак иртнĕ кунсенче «Хĕрлĕ Мăрат» колхоз членĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли 16 мăшăр ăшă перчатка, 5 мăшăр çăматă ярса пачĕç. «Çĕнĕ пурнăç» колхоз — 3 кĕрĕк пиншак, 3 мăшăр çăматă, 25 питшăлли, çăм перчаткăсемпе алшишсем пухса панă

В. АНДРИАНОВ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 19-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 19-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Октябрĕн 18-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче противникăн войскăсем турттарса пыракан 10 автомашинине пĕтерсе тăкнă, артиллерин 3 батарейине тата 10 минометне пусарса лартнă, противникăн пĕр поездне çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсен тата пехотин хаяр атакисене сирсе тăнă. Пĕр завод районĕнче ытла та хаяр çапăçусем пынă. Çав участокра кĕрешекен пирĕн чаçсем гитлеровецсен пур атакисене те сирсе янă, нимĕçсен 8 танкне пĕтерсе тăкнă тата икĕ батальона çити пехотине вĕлерсе пĕтернĕ. Унсăр пуçне, гвардеец-минометчиксем вăйлăн персе тăрса 6 танка çунтарса янă тата противникăн 400 салтакĕпе офицерне вĕлерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсем йышăнса тăракан рубежсене çирĕплетнĕ тата противникăн пысăк мар ушкăнĕсен атакисене сире-сире янă. Пĕр высота районĕнче румынсен пехоти Ведехинпа Тюрин юлташсем командир пулса тăракан подразделенисем хӳтĕлекен участока темиçе хутчен атакăланă. Пирĕн боецсем противника каялла сирсе янă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 150 вилли выртса юлнă. Ытти участоксенче пирĕн разведка отрячĕсем активлăн кĕрешсе, нимĕçсен салтакĕсене пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Зенитчиксем Каберникпа Рассейкин юлташсем нимĕçсен 2 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Моздок районĕнче совет войскисем противникăн атакисене сирсе тăнă. Пĕр участокра нимĕçсен танкĕсемпе пехоти пирĕн оборона ăшне савăлланса кĕме пултарнă. Каç пуласпа пирĕн чаçсем, хаяр çапăçусем хыççăн противника каялла сирсе ярса, хăйсен позицийĕсене каялла туртса илнĕ. Гитлеровецсем хăйсен малтанхи позицийĕсем çине чакнă. Çапăçу хирĕнче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсен 500 вилли таран выртса юлнă.

* * *

Новороссийскран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн чаçсем наступлени тăвакан противникпа çапăçнă. Тăшмана пысăк çухатусем кӳнĕ хаяр çапăçу хыççăн пирĕн подразделенисем халăх пурăнакан икĕ пунктран тухса кайнă. Тепĕр участокра пирĕн войскăсем гитлеровецсен атакисене сирсе ярса, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1.200 çынна çити вĕлерсе тăкнă.

* * *

Воронеж районĕнче пирĕн разведчиксен ушкăнĕ юханшывăн тепĕр енне каçса кайнă та тăшманăн блиндажĕсем çине гранатăсем ывăтнă. Нимĕçсен 20 салтакне тата станковăй пулеметне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн снайперсем юлашки талăксенче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене 162 çынна вĕлернĕ.

* *

Ленинград партизанĕсен ушкăнĕ нимĕçсен поездне сирпĕнтерсе янă. Пĕр паровоз, автомашинăсем тиенĕ икĕ платформа, танксем тиенĕ 2 платформа тата салтаксем ларса пыракан 2 вагон çĕмĕрĕлнĕ. Унсăр пуçне, тĕрлĕ военнăй грузсем тиенĕ 24 вагон рельссем çинчен тухса кайса вăйлă сиенленнĕ

* * *

Хĕрлĕ Çар енне нимĕçсен салтакĕ Вильгельм К. каçнă. Вăл нимĕç палачĕсем оккупациленĕ совет районĕсенче тĕлĕнмелле тискерлĕхсем туни çинчен каласа панă: «Сентябрьте,—тенĕ вăл,—эпĕ грузовой автомашинăпа Минскран Сычевкăна кайрăм. Кашни хулара, кашни ялтах çакса вĕлернĕ çынсен виллисене куртăм. Сычевăра пĕр кунта 7 çынна çакса вĕлерчĕç. Тата темиçе кунтан площадьре татах икĕ çынна—65 çулхи старике—сапожнике тата 40 çулхи рабочие çакса вĕлерчĕç. Эпĕ Долы, Остопово, Субботино, Пончево, Мокрое тата ытти ялсенче те пултăм, вĕсенче пуринче те хресченсем калама çук пысăк асап тӳснине куртăм.

Нимĕçсен çар влаçĕсем вĕсен пур инвентарьне, выльăх-чĕрлĕхне тата продовольствине туртса илнĕ. Çынсем çемьи-çемьипе выçă вилеççĕ».

* * *

Милевская-Табор участокĕнче (Чехословакия) чех патриочĕсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи фронта Итали войскисене илсе каякан поезда ӳпĕнтерсе янă. Вагонсен çĕмĕркĕсем айĕнчен вилнĕ е аманнă 100 çынна ытла туртса кăларнă. Италин чылай салтакĕсем пĕр хыпарсăр çухалнă. Вĕсем çак çухалса кайнипе усă курса тарнă пуль тесе шутлаççĕ.

Октябрĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Октябрĕн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче тата **Моздок** районĕнче çапăçнă. Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

* * *

Сталинград районĕнче çаплах хаяр çапăçусем пынă. Противникăн пехотипе танкĕсем пирĕн пĕр завод территорийĕнчи опорнăй пункта темиçе хут та атакăланă. Пирĕн боецсем гитлеровецсен атакисене сирсе янă. Çав çапăçура нимĕçсен 7 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă тата противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 400 çынна çити вĕлерсе пĕтернĕ. Тепĕр участокра Н-ски чаçăн подразделенийĕсем çĕрлехи çапăçура нимĕçсен 10 пулеметне, 4 минометне пĕтерсе тăкнă, 13 дзочĕпе блиндажне çĕмĕрнĕ тата нимĕçсен пĕр рота ытла пехотине вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн разведка отрячĕ, противникăн малти хуралне тапăнса, нимĕçсен 40 салтакне вĕлернĕ тата 2 пулемет тытса илнĕ. Н-ски артиллери чаçĕ противникăн 4 орудине тата миномет батарейине пĕтерсе тăкнă, икĕ ротăна çити гитлеровецсене сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Моздок районĕнче пирĕн чаçсем противникăн атакисене сирсе тăнă. Юлашки виçĕ кун хушшинче Н-ски чаçăн боецĕсем противникăн пехотине пĕр батальона çити пĕтерсе тăкнă, нимĕçсен 19 танкне персе çĕмĕрнĕ е çунтарса янă. Тепĕр участокра пирĕн подразделенисем нимĕçсене халăх пурăнакан пĕр пунктран, икĕ хутчен аларан алла куçнăскертен, хăваласа кăларнă. Противник пысăк çухатусем тӳснĕ.

* * *

Ленинград фронтĕнче пирĕн снайперсем, разведка групписем тата артиллери икĕ кун хушшинче 200 гитлеровеца ытла вĕлернĕ, 9 дзота çĕмĕрнĕ, противникăн çар грузĕсем тиенĕ 9 автомашинине пĕтерсе тăкнă. Пирĕн боецсем пĕр оруди, темиçе пулемет тата боеприпассем тытса илнĕ.

* * *

Минск облаçĕнчи партизансен отрячĕ противникăн салтакĕсем ларса пыракан поезда ӳпĕнтерсе янă. Вагонсем пурте ванса кайнă.

* * *

Нимĕçсен 36-мĕш мотодивизийĕнчи 118-мĕш мотополкран Хĕрлĕ Çар енне каçнă ефрейтор Карл П. çапла каласа панă: «Пĕр уйăх каялла эпĕ маршевăй батальонпа пĕрле Австрирен Хĕвелтухăçĕнчи фронта тухса кайрăм. Нимĕçсем оккупациленĕ совет территорийĕ тăрăх пынă чухне эпĕ партизансен ĕçĕсем çинчен нумай илтрĕм. Эпĕ хам çа-

Вĕçĕ 2-мĕш страницăра.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Осоавиахим Чувашии» звенори самолетсенчен пĕри. Çав звенон 2-мĕш номерлĕ самолечĕпе чаçри чи лайăх разведчик — старши лейтенант В. Г. Подколоднов юлташ вĕçет.



УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: «Осоавиахим Чувашии» звенори самолетсенчен пĕри. Çав звенон 3-мĕш номерлĕ самолечĕпе сывлăшри шыравçăсем: экипаж командирĕ старши лейтенант орденоносец **Киселев**, штурман лейтенант **Смирнов** тата стрелок старши сержант **Еременко** юлташсем вĕçеççĕ.

Питех те чаплă боевой машинăсем

Самолетсен „Осоавиахим Чувашии" ятлă звенин экипажĕ республикăри ĕççыннисем патне янă çыру

Самолетсен «Осоавиахим Чувашии» ятлă звенин экипажĕ республикăри ĕççыннисем патне çакăн пек çыру янă:

«Сталинла соколсем — Çурçĕр-Хĕвеланăç фронтĕнчи сывлăшри разведчиксем Сире хĕрӳллĕ боевой салам яраççĕ.

Эсир пухнă укçа-тенкĕпе, хамăрăн тăван çĕршыври заводра питех те чаплă самолетсем-разведчиксем туса кăларнă. Самолетсен вĕçеври пысăк пахалăхĕшĕн, çирĕп те шанчăклă броньăшăн, самолетсем çинчи лайăх хĕçпăшалсемшĕн тата чаплă фотоаппаратурăшăн летчиксем Сире тав тăваççĕ.

Фашистсен çăханĕсем пирĕн сывлăшри шыравçăсене темиçе хутчен те атакăлама пăхни кашнинчех путлана-путлана ларчĕ. Иртĕхсе кайнă икĕ «Мессершмитта» сывлăшри çапăçусенче стрелок-старшина Л. Н. Бондаренко персе ӳкерчĕ, виççĕмĕш çăхана та Л. А. Романовский капитанăн пулемечĕ çавăн пек шăпах тивĕçтерчĕ.

Сирĕн укçа-тенкĕпе тунă самолетсемпе эпир нумай хутчен разведкăсене кайса противникăн аэродромĕсене, укрепленийĕсене, кĕперĕсене тата тăшманăн войскисем пухăнса тăнă вырăнсене фотоаппаратсемпе ӳкере-ӳкере илнĕ.

Сывлăшри разведка — фронт командованийĕн куçĕпе хăлхи пулса тăрать. Халĕ çав самолетсемпе пирĕн чаçăн чи лайăх летчикĕсем сывлăшри разведкăна çӳреççĕ. Вĕсем хушшинче: подполковник И. Д. Завражнов, капитан Галушкин, старши лейтенант В. Г. Подколоднов, лейтенант В. А. Смирнов, старшина Л. Б. Гитлин, старшина Е. А. Котельников тата ыттисем те. Çак юлташсене тата ыттисене нумайĕшне отечественнăй вăрçă фрончĕсенчи боевой ĕçсемшĕн Совет Союзĕн орденĕсемпе наградăланă.

Хаклă юлташсем! Эпир Сире çакна шантарса калатпăр: Сирĕн укçа-тенкĕпе тунă самолетсем шанчăклă алăсенче. Эпир малалла та хамăрăн боевой ĕçе нимĕç оккупанчĕсене пуçĕпех çапса аркатиччен, хамăрăн вăя тата пурнăça хĕрхенмесĕр, туса пырассине шантаратпăр.

Фронтпа тылăн вăйĕсене татах та таччăнрах пĕтĕçтерер!

Совет Союзĕнчи халăхсен сталинла туслăхĕ сывă пултăр!

Фашистла варварсене çĕр синчен шăлса пăрахатпăр!»

Сталинград районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Сталинград районĕнче хаяр çапăçусем пĕр минутлăха та лăпланмаççĕ. Тăшман çапăçăва çĕнĕрен те çĕнĕ вăйсем кĕрте-кĕрте ярать, темле пысăк çухатусем тӳснине пăхмасăрах малалла талпăнать. Фашистсен командованийĕ атакăсене вăйлатма танксемпе пехотăн групписене вĕçĕмсĕр кĕртсе тăрать.

Тăшманăн авиацийĕ те халиччен хи пекех пысăк активлăх кăтартать. Фашистсен авиацийĕ пирĕн позицисем çине вĕçĕмсĕр бомба тăкать.

Совет чаçĕсем гитлеровецсен атакисене пĕрин хыççăн тепĕрне сире-сире яраççĕ. Н-ски чаçăн подразделенийĕсем тăшманăн пирĕннинчен йышлăрах вăйĕсене хирĕç çапăçнă. Çапăçăвăн малтанхи сехечĕсенче тăшманăн автоматчикĕсемпе танкĕсем пирĕн оборонăна саваланса кĕме пултарнă, анчах кайран пирĕн боецсем контратака пуçласа ярса, тăшмана хĕссе кăларнă. Çав çапăçура тăшманăн 10 танкне ытла çунтарса янă тата гитлеровецсене 3 ротăна çити пĕтерсе тăкнă.

Тепĕр тĕлте тăшман совет автоматчикĕсен ротине темиçе сехет хушшинче 7 хутчен атакăланă. Пирĕн воинсем, тăшман хыттăн хĕснине паттăрла хирĕç тăрса противника пăтраштарса янă та, контратака пуçласа янă. Çак тытăçура нимĕçсен 47 салтакпа офицер пĕтнĕ. Трофейăсем: станковăй пулемет тата темиçе мотоцикл тытса илнĕ.

Оруди командирĕ комсомолец-сержант Алексей Малышин хăйĕн расчечĕпе фашист автоматчикĕсен группине атакăланă. Гитлеровецсем çине гранатăсем ывăтса, артиллеристсем нимĕçсен пехотине пĕр взвода яхăн пĕтерсе тăкнă.

Пĕр хĕсĕк вырăна нимĕçсем танксемпе пехотăн пысăк ушкăнне илсе пынă. Ку çапăçура противник пĕр заводăн çурçĕр енчи пайне çĕмĕрсе кĕме пултарнă. Çак районра кунĕпех хаяр çапăçусем пынă Икĕ енĕ те темиçе хутчен контратакăна куçнă. Каç пулса çитнĕ тĕле совет чаçĕсем тăшманăн пирĕн оборонăна çĕмĕрсе кĕнĕ танкĕсене пурне те пекех пĕтерсе тăкнă.

Моздок районĕнче

ДЕЙСТВУЮЩИ АРМИ, октябрĕн 17-мĕшĕ. (**ТАСС спецкорĕ**). Моздок районĕнче тăшман темиçе участокра пирĕн позицисене атакăланă. Нимĕçсем «Викинг» текен дивизин суйласа илнĕ батальонĕсене çапăçăва кĕрте-кĕрте янă. Фашистсен пур атакисене те, тăшмана пысăк çухатусем тӳстерсе, сирсе пăрахнă. Пĕр участокра çеç тăшман пăртак çитĕнӳ тума пултарнă. Анчах вăл çитĕнӳ те кĕске вăхăтлăха çеç пынă. Пирĕн подразделенисем хăйсен вăйĕсене йĕркелесе контратака пуçласа янă, унтан тăшмана сирсе ывăтнă.

Тепĕр участокра, малтан артиллерирен виçĕ сехет хушши персе çул уçса хатĕрленĕ хыççăн, нимĕçсен пехоти пирĕн оборонăн малти хĕрри патнелле шăвăннă. Пирĕн боецсем, артиллерирен тата винтовкăсенчен персе, нимĕçсене çĕр çумнех хĕстерсе лартнă. Гитлеровецсем çĕнĕрен атака пуçласа янă. Тăшман салтакĕсем 35 йывăр тата вăтам машинăсен хӳттипе пирĕн çинелле шунă. 200 салтакпа офицер, 5 танк çухатнă хыççăн противник каялла чакнă.

Пирĕн чаçсем пĕр паллă вырăн йышăнакан высоташăн çапăçнă. Нимĕçсем совет воинĕсем хĕснине тӳсеймесĕр урăх позицисем çине каялла чакнă. Сăрт-туллă районсенче пирĕн чаçсем, противник хирĕç тăнине сирсе пăрахса, ăна сăртсенчен, çырмасенчен усă çеçенхирелле хĕссе кăлараççĕ.

Г. ОШАРОВСКИЙ.

Хĕрлĕ Çар боецĕсене

ЭЛĔК, октябрĕн 17-мĕшĕ. (**Хамăр корр.**). Районри колхозсем Октябрь уявĕ ячĕпе Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем патне парнесем ярса параççĕ. Паянхи куна пурĕ 375 килограмм ашкакай, 60 килограмм çу, 43 килограмм пыл, 2123 штука çăмарта, 36 килограмм махорка, пĕр тонна ытла тулă çăнăхĕ ярса панă. Парнесем хатĕрлесе парас ĕç малалла пырать.

Кунсăр пуçне колхозниксемпе колхозницăсем хăйсем шефа илнĕ госпитальри боецсене хăналама парнесем пухаççĕ.

Х. ЛИСИН.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Октябрĕн 20-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерĕвĕн вĕçĕ

написсем салтаксенчен илтнĕ тĕрĕс пулнине кăтартрĕç. Минскран Смоленска каякан çул çинче кăна эпĕ партизансем ÿпĕнтерсе янă 15 паровоза тата питех те нумай платформăсемпе вагонсене куртăм. Çавăнтах çунса кайнă танксемпе автомашинăсем сапаланса выртатчĕç».

* * *

Нимĕçсен фашистла ирсĕрĕсем Ровно облаçĕнчи Корец хулинче çынсене тискеррĕн вĕлернĕ. Гитлерла пусăкасаксем 105 çемьене вĕлерсе тухнă, юлашки виçĕ уйăх хушшинче нимĕçсем çав хулара темиçе пин çынна вĕлернĕ. Хулан нумай кварталĕсемпе урамĕсем пуш-пушах тăрса юлнă.

* * *

Бельгире нимĕçсен оккупациллĕ влаçĕсем рабочисене гитлерла каторгăна кайтарас тесе тĕрлĕ майпа пусмăрлаççĕ. Антверпенра, гестапо начальникĕ хушнă тăрăх, машинăсем тăвакан заводри 68 рабочие, Германири предприятисенче ĕçлесси çинчен калаçма килĕшменнискерсене вырăнтан кăларнă. Çав кунах вĕсене продовольстви карточкисемсĕр тăратса хăварнă. Каçхине завод хапхи патĕнче пысăк ушкăн пуханнă. Рабочисем заводран кăларса янă çынсене пурне те каялла илме ыйтнă, каялла илмесен забастовка тăватпăр тенĕ. Нимĕçсен вара рабочисем ыйтнине пурнăçа кĕртмелле пулнă.

Пирĕн земляксем

Вăтăрвиççĕмĕш атака

Танк командирĕ старши лейтенант Непорада, водитель старши сержант Иван Макаров, радист сержант Сергей Смирнов*) тăшмана хирĕç вăтăрвиççĕмĕш атакăна кайнă.

Танк вăрман витĕр шатăртаттарса пынă. Артиллери персе тăнин сассипе танк пынине нимĕçсем сисмен, вăрман кĕтессинчен сиксе тухсан тин вĕсем ăна курнă. Танк малалла, чугунçул çывăхнелле пынă. Чугунçулăн сылтăм енче, вăрманта, тăшман пехотипе автоматчикĕсем вырнаçнă пулнă. Макаров танка тытса пырса дзотсене ишĕлтере-ишĕлтере тăкнă вăхăтра танк командирĕ Непорада вăрман хĕррине башня çинчи пулеметран персе тăнă. Нимĕçсем ялалла чакма пуçланă. Çав вăхăтра Макаров вĕтлĕх витĕр вут-хĕм çиçнине асăрханă—нимĕçсен туписем унăн танкĕ çинелле пенĕ. Темиçе снаряд танк çамкинчен пырса тивнĕ. Пăхмалли хушăк витĕр яванса кĕнĕ çулăм Макаровăн куçĕсене пĕр самантлăха хупăрланă. Анчах танк брони сиенленмен—нимĕçсен термитлă снарядсем çуккишĕн Макаров хĕпĕртенĕ. Вăл танка тÿрех тупă çине илсе кайнă та ăна лапчăтса лартнă, икĕ тупă патĕнчи салтаксем тарнă, вĕсене радист Смирнов пулеметран персе пĕтерсе тăкнă.

Нимĕçсен батарейи патĕнчен боеприпассем патне каймалли сукмак пулнă. Складпа юнашарти траншейăра нимĕç автоматчикĕсем ларнă. Макаров танка траншея патне илсе пынă, унта вара Смирнов нимĕçсене тĕл персе пĕтерсе тăкнă. Танк экипажĕн пĕрремĕш трофейĕсем—снарядсем тултарнă 240 ещĕк тата 2 юсавлă тупă пулнă.

Тепĕр çур сехетрен танкистсем горючисен складне туртса илнĕ. Часах каç пулса çитнĕ. Пехота оборонăра тăма вырăн йышăннă. Анчах танк экипажĕ çĕрĕпех куç хупман. Танк нимĕçсен ял çывăхĕнчи блиндажĕсем çине çĕрĕпех персе тăнă. Ирхине тепĕр йывăр танк вĕсем патне снарядсем илсе пырса панă. Унтан икĕ танк пĕрле пулса нимĕçсене ялтан хăваласа кăларнă. Вара экипаж горючи тултармалли пункта кайма приказ илнĕ.

Макаров машинăна илсе çитернĕ-çитерменех ăна нимĕç автоматчикĕсен ушкăнĕ пирĕн тыла кĕрсе кайни тата чугунçул линийĕ тăрăх пехотăна татса хăварма хăтланни çинчен пĕлтернĕ. Машинăна горючи тултарса пĕтермесĕрех Макаров чугунçул патнелле кайнă. Танк вăрман хĕррине тухсан, старши лейтенант Непорадапа радист Смирнов пулеметсенчен персе автоматчиксене сапаласа янă. Унтан Макаров, черечĕпе виçĕ хушăкран та пăхса сăнаканскер, пирĕн йывăр танк вăрманта пĕр вырăнтах, туппипе пулемечĕсенчен пемесĕр тăнине асăрханă. Макаров хăйĕн танкне çавăн патне илсе пынă. Йывăр танкăн моторĕ пăсăлнă пулнă, ун çинче снарядсемпе пулемет дискисем юлман. Радио тăрăх Смирнов унта юлма тата йывăр танка сыхлама приказ илнĕ. Макаров машина çинчен аннă та ăна çулçăсемпе витсе пытарса, каллех хăйĕн танкĕ çине кĕрсе ларнă.

Тепĕр çур сехетрен йывăр танк патнелле лапам тăрăх 150 нимĕç пынă. Иккĕмĕш танка, пытантарнăскере, вĕсем асăрхаман. Нимĕçсем тăтăшах персе, кăшкăрашса пĕр-пĕрне хавхалантарса пынă. Çав шав вăхăтĕнче Макаров мотора ĕçлеттерме тытăннă. Унтан танка хăвăрт ярса, нимĕçсем çине пырса кĕнĕ, фашистсене гусеницăсемпе лапчăтнă. Çапăçу хыççăн пирĕн пехотинецсем шутласа тухнă тăрăх, çакăн чухне танк хăйĕн гусеницисемпе фашистсен çĕр çыннине лапчăтса вĕлернĕ.

Макаров йывăр танка хăйĕн танкĕнчен кăкарнă та подразделенине илсе çитернĕ.

Нимĕç захватчикĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйне палăртнă Сергей Кириллович Смирнова, Военный Советăн 1942 çулти августăн 31-мĕшĕнчи приказĕ тăрăх, «За отвагу» медальпе наградăланă.

Александр ГИТОВИЧ.
(«В решающий бой» хаçатран).

*) С. Смирнов юлташ Чăваш АССР-чи Калинински районри Кÿлхĕрри ялĕнчен. Хĕрлĕ Çара каяс умĕн вăл иккĕмĕш колхоз театрĕн директорĕ пулса ĕçленĕ

Çăмарта хатĕрлевĕн планне çак кунсенчех тултармалла

ИĔПРЕÇ. 1942 çулхи обязательство тăрăх государствăна çăмарта хатĕрлесе парас ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Район паянхи куна плана 49,5 процент çеç тултарнă. Ку ĕç уйрăмăнах Улакасси ялсоветĕнче начар пырать. Çак ялсовечĕ çăмарта хатĕрлемелли плана 32,7 процент çеç тултарнă. Пĕчĕк Упакасси, Шуркасси, Шибечеч ялĕсенчи единоличниксен хуçалăхĕсем государствăна кăçал пĕр çăмарта та паман. Апла пулсан та, ялсовечĕ вĕсем пирки нимĕнле мера та йышăнман. «Победа» колхоз председателĕ Осипов начар ĕçленипе пула колхозниксен хуçалăхĕсем государствăна 4.614 çăмарта çеç панă. Колхоз хăй те çăмарта памалли плана 23 процент çеç тултарнă. Упакасси ялсовечĕн исполкомĕнче тата вăл ялсоветне кĕрекен колхозсенче руководительсем çăмарта хатĕрлевĕн планне тултарма тăрăшмаççĕ.

Çавăн пекех Туçа ялсоветĕнче те çăмарта хатĕрлес ĕçе начар организациленĕ. «Красный металлист» колхозăн кăçал государствăна 9.498 çăмарта памалла, вăл 2.336 çăмарта çеç панă. Колхозник хуçалăхĕсем енĕпе илсе пăхсассăн, ку ĕç пушшех те начар тăрать, 12.600 çăмарта хатĕрлес вырăнне 1.207 çăмарта кăна хатĕрленĕ. Единоличник хуçалăхĕсем енĕпе вара плана 4,3 процент çеç тултарнă. Çăмарта хатĕрлес план пурнăçа кĕрсе пыманни вăл йăлтах ялсовет председателĕ Павлов, колхоз председателĕ коммунист Новиков, сельпо председателĕ коммунист Архипов çак ыйтупа интересленменнинчен килнĕ.

Энтриел, Кĕлĕмкасси, Çĕнĕ Чураш, Эпеç, Ворошиловски ялсовечĕсем те çăмарта хатĕрлемелли плана 35—40 процентран ытла тултарман. Энтриел ялсоветне кĕрекен (ялсовет председателĕ Кириллова) Кăшмас Туçа ялĕнчи единоличник хуçалăхĕсен обязательство тăрăх кăçал государствăна 7.560 çăмарта памалла, анчах вĕсем пĕр çăмарта та паман. Колхозниксен хуçалăхĕсем хушшинче те 3.700 çăмарта хатĕрлес вырăнне 1.328 çăмарта çеç пуçтарса панă, колхоз хăй те çăмарта хатĕрлес плана 51 процент çеç тултарнă.

Çав вăхăтрах государствăна çăмарта хатĕрлесе парас тĕлĕшпе лайăх ĕçлекен ялсовечĕсемпе колхозсем те пур. Сăмахран, Чăваш Тимеш ялсовечĕ çăмарта хатĕрлевĕн планне 108 процент тултарнă. Çак ялсоветĕнчи колхозниксем государствăна планран ирттерсе 3.831 çăмарта панă.

Чылай колхозсем чăх-чĕп фермисенчен государствăна çăмарта памалли плана ытлашшипех тултарчĕç. «Красный Октябрь» колхоз планран ирттерсе 141 çăмарта, «Комбайн» колхоз 100 çăмарта ытла, «Искра» колхоз 289 çăмарта панă. Çавăн пекех плана «Канаш» колхоз 114 процент, Ленин ячĕпе тăракан колхоз 110 процент, Сталин тата Крупская ячĕпе тăракан колхозсем 102—103 процент тултарчĕç. Малта пыракан колхозсен примерĕпе ытти колхозсен те государствăна çăмарта хатĕрлесе парас плана çак кунсенчех тултармалла.

Д. МИХАЙЛОВ.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Пурне те перекетлени çĕршыва ытларах продукци пама пулăшать

ОКТЯБРЬСКОЕ. Караньялĕнчи «Труд» промартель коллективĕ, Пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, продукцин хăйне ларакан хакне 3,6 процент чухлĕ чакарма обязательство илнĕччĕ. Коллектив пур япалана та перекетлессишĕн кĕрешсе, çак обязательствăна чыслăн пурнăçларĕ. Халĕ Октябрь уявĕ умĕнхи ăмăртура эпир ку тĕлĕшпе çĕнĕ обязательство илтĕмĕр: таварăн хăйне ларакан хакне 7 процент чухлĕ чакарма пултăмăр. Мĕнпур ĕçе çирĕппĕн тĕрĕслесе тăрса, производство планне ирттерсе тултарса пырсан çеç, продукцин пахалăхне лайăхлатса пырсан çеç, пур чухне те, пур çĕрте те перекетлĕхшĕн кĕрешсен çеç çак обязательствăна ăнăçлăн пурнăçа кĕртме пулать. Перекетлĕхшĕн кĕрешнĕ чухне ĕç итогĕсен анализĕсене уйăх вĕçленсен çеç мар, кашни вунăкунлăхра, кашни кун туса пырас пулать. Çапла туни чĕртаварсене, топливăна, энергине тата ыттине те нормăран ирттерсе тăкакласситчен хăтарать.

Вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп перекетлĕхшĕн кĕрешесси промысла кооперацин артелĕсенче те пысăк задача пулса тăрать. Артельсен производстви тĕрлĕрен пулнипе тата уйрăм цехсем пĕр çĕрте мар пирки промысла коопераци системинче чĕртаварсене, укçа-тенке, топливăна ытлашши тăкаклани час-часах пулкалать.

Пирĕн артелĕн тир-сăран тăвакан заводсăр пуçне тата 8 цех пур. Çав цехсем уйрăм çынсенчен илнĕ çуртсенче вырăнаçнă. Вĕсенче çĕр çынна яхăн ĕçлет. Артель производстви çапла сапаланчăк вырăнаçнă пирки ĕçĕн результачĕсене кашни кунах пăхса тухма тивет. Пăхса тухнă чухне эпир перекетлĕх ыйтăвĕсене те хускататпăр, рабочисен ку тĕлĕшпе çитменлĕхсем пулсан, вĕсене асăрхаттарса хăваратпăр. Çапла туни цех заведующийĕсене çеç мар, кашни рабочие перекетлĕхшĕн кĕрешме вĕрентет.

Кăçалхи çулăн иртнĕ 9 уйăхĕ хушшинче пирĕн артель чĕртаварсемпе материалсене пурĕ 17.769 тенкĕлĕх перекетлерĕ. Çав материалсенчен 150 мăшăр кĕпе-йĕм, 91 кĕрĕк пиншак, 192 мăшăр алшиш т. ыт. япаласем çĕлесе государствăна панă. Производствăран юлнă тир татăкĕсенчен 153 воротник, 177 мăшăр ăшă алшиш, çĕлĕксем сахал мар тата ытти вак-тĕвек япаласем (пурĕ 19.829 тенкĕлĕх) çĕлесе сутнă. Кусемсĕр пуçне, çăм 2 пин килограмм ытла, çу 950 килограма яхăн пухса, вĕсемпе производствăра усă курнă. Хамăрăн шалти ресурссемпе май пур таран усă курни производство планне уйăхран уйăха ирттерсе тултарма пулăшрĕ.

Администраци управленийĕпе цехсен тăкакĕсене сахаллатни пысăк перекет кÿчĕ. Çак тăкаксене эпир сметăпа пăхнинчен 37.868 тенкĕ сахалтарах тунă.

Перекетлĕхшĕн çулталăкĕпех кĕрешнине пула, пирĕн артель çулталăкри накопленисен планне 9 уйăх хушшинче 219 процент тултарчĕ, планран ирттерсе 92.476 тенкĕ перекет пачĕ.

Çаксем ĕнтĕ пирĕн артельре перекетлĕхшĕн пыракан кĕрешÿри малтанхи çитĕнÿсем пулаççĕ. Артель коллективĕн задачи—çав çитĕнÿсемпе лăпланса лармасăр вăрçă вăхăтĕнчи перекетлĕхшĕн татах та тимлĕнрех кĕрешесси пулать.

И. МОКЕЕВ,
«Труд» промартелĕн правлени председателĕ.

Перекетлĕхшĕн кĕрешесси—хальхи вăхăтри чи пысăк ĕç

Отечественнăй вăрçă пирĕн предприятисем умне чĕртаварсене, материалсене, топливăна тата электроэнергине май пур таран перекетлес ыйтăва çивĕччĕн кăларса тăратрĕ. Типтерлĕх, перекетлĕх—вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп закон пулса тăчĕç.

Республикăри малта пыракан фабрикăсемпе заводсем фронтпа çĕршыв валли уйăхран уйăха продукци ытларах туса кăларнă вăхăтрах чĕртаварсемпе материалсене, топливăпа электроэнергине перекетлеççĕ.

Канашри вагонсем юсакан завод, чĕртаварсемпе материалсене перекетлесе тата станоксемпе, инструментсемпе тирпейлĕн усă курса, кăçалхи çичĕ уйăх хушшинче 5 миллион тенкĕ перекетлесе хăварнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах заводри Коломиец, Токарев тата Соколовский юлташсем ертсе пыракан цехсем лайăх ĕçленĕ. Коломиец юлташăн цехĕ, сăмахран, иккĕмĕш кварталта 56 пин тенкĕ, июльпе август уйăхĕсенче 123 пин тенкĕ перекетленĕ. Çак ÿсĕме цех коллективĕ, тĕпрен илсен, кивĕ детальсемпе ытларах усă курса тунă.

Анчах кусем заводра перекетлĕхшĕн кĕрешнин малтанхи утăмĕсем кăна-ха. Завод коллективĕ умĕнче ку тĕлĕшпе питех те пысăк задачăсем тăраççĕ. Чи малтанах, топливăна, электроэнергине нормăран ирттерсе тăкакланине пĕтермелле. Чылай цехсем ку таранччен топливăна хуçасăрла тыткаланă, электроэнергине усăсăр пĕтернĕ. Рессорнăй цехра хăшпĕр уйăхсенче кашни тонна продукци туса кăлармассерен 415 килограмм топливо ытлашши çунтарнă. Топливăна, сĕрмелли çусене тата ытти материалсене те хуçасăрла тыткалани тимĕрçĕ цехĕнче, Губский тата Баймуратов юлташсем начальник пулса тăракан цехсене те палăртать. Хăшпĕр цехсенче тата станоксемпе инструментсене тирпейсĕр тыткалани, ĕç вăхăтне усăсăр ирттерни—перекетлĕхшĕн кĕрешес ĕçри чăрмавсем пулса тăраççĕ.

Заводри партипе хуçалăх активĕ хăйĕн нумаях та пулмасть иртгернĕ канашлăвĕнче, перекетлĕх ыйтăвне тĕплĕн сÿтсе-явса, малашне чĕртаварсене, топливăна тирпейлĕ тыткалас, электроэнергине сахалтарах тăкаклас тĕлĕшпе татăклă мероприятисем йышăнса хăварчĕ. Заводри хуçалăх работникĕсемпе парти организацийĕн задачи çав мероприятисене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртесси пулать.

Перекет кассисен ĕçне сÿрĕклетмелле мар

Вăрçă нумай укçа-тенкĕ ыйтать. Çавăнпа та вăрçă мероприятийĕсене тунă çĕре укçа-тенкĕ ытларах парса тăмалла. Çак майпа совет патриочĕсем нумай ĕçсем турĕç. Оборона фончĕ туни, бронепоезд тума укçа пухни, танксен колоннине тума пулăшни, самолетсен эскадрильине тăвасси, Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем, парнесем пухасси — çаксем пурте совет патриочĕсем пуçарса янă ĕçсем пулса тăраççĕ.

Вăрçă пуçланнăранпа пирĕн республикăри ĕççыннисем перекет кассисене хăйсен укçи-тенкисене 2.139 пин тенкĕ хывнрĕç. Чăваш республикинчи ĕççыннисем вăрçă мероприятийĕсене тума икĕ миллион ытла укçа-тенкĕ пачĕç.

Перекет кассисене укçа-тенкĕ хываси кулленех вăйланса пырать. Шупашкар хули тăрăх илсен, кăçал ĕççыннисем хăйсен укçи-тенкисене 519 пин тенкĕ, Канаш районĕнче 195 пин тенкĕ, Улатăр районĕнче 195 пин тенкĕ перекет кассине хывнă. Анчах та республикăри пур перекет кассисем те вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Ишлей, Хĕрлĕ Чутай, Кÿвакино, Первомайски, Пăрачкав, Шăмăршă, Тăвай районĕсенчи перекет кассисем çак юлашки виçĕ уйăхра ĕççыннисем хушшинче агитациллĕ-массăллă ĕçе туса пырас тĕлĕшпе начар ĕçлерĕç. Çакна пула вăл районсенче перекет кассинчи вкладчиксен хисепĕ чакнă. Перекет кассисем вăрçă вăхăтĕнче çакнашкал ĕçлени çителĕксĕр.

Перекет кассине укçа-тенкĕ хывни—государство бюджетĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать, çавăнпа та перекет кассисенче ĕçлекен кашни работник çакна лайăх пĕлсе тăни кирлĕ. Перекет кассине хунă укçа-тенкĕ вăрçă вăхăтĕнче питех те кирлĕ мероприятисем тунă çĕре каять. Çакăн çинчен кашни колхознике, колхозницăна каласа ăнлантармалла.

Колхозниксем кăçал пахча-çимĕçсенчен пысăк тупăш илеççĕ. Кашни колхозникăн хăйĕн ытлашши укçа-тенкине перекет кассинче усрама тăрăшмалла. Перекет кассине хывнă укçа-тенкĕ çирĕп алăра сыхланать. Вăл укçапа государство кирлĕ ĕçсем туса ирттерме пултарать.

Халĕ перекет кассисем ĕççыннисенчен выигрышлă вкладсем йышăнма тытăнчĕç. Çак вкладсен тупăшне выигрышлă майсемпе тÿлеççĕ. Выигрышлă вкладсен вылявĕсем çулталăкăн кашни çурçулĕнчех, апрелĕн 1-мĕшпе 10-мĕшĕ, октябрĕн 1-мĕшпе 10-мĕшĕ хушшинче пулса иртеççĕ.

Кашни тиражрах перекет кассин 1000 кĕнеки çине пĕр выигрыж—выляса илнĕ кĕнекери укçан вăтам суммин 200 проценчĕ чухлĕ; икĕ выигрыж — выляса илнĕ кĕнекери укçан вăтам суммин 100 проценчĕ чухлĕ; 22 выиграж—выляса илнĕ кĕнекери укçан вăтам суммин 50 проценчĕ чухлĕ пулать.

Вылявсен пĕрремĕш тиражĕ 1943 çулхи апрелĕн 1-мĕшпе 10-мĕшĕ хушшинче пулмалла.

Вкладчик хăйĕн выигрышлă вкладне ÿстрме те, ăна кирек хăçан та илме те пултарать.

Выигрыжлă вкладсем çинчен ĕççыннисене анлăн ăнлантарса памалла. Перекет кассисене укçа-тенкĕ ытларах хуни Хĕрлĕ Çара ытларах пулăшни пулать.

А. ПОКРОВСКИЙ,
Чăваш АССР-ĕнчи перекет кассисен Управленийĕн начальникĕ.

Елчĕк МТС-ĕнчи трактористсен пуçарăвне ырлаççĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (Телефонпа). Машинно-тракторнăй станцин И. Карпов юлташ ертсе пыракан 13-мĕш номерлĕ трактор бригади Елчĕк районĕнчи трактористсен пуçарăвне кăмăлтан ырласа йышăнчĕ. «Тракторист Чувашии» ятлă танк колоннине тума бригадир И. Карпов 1.000 тенкĕ, фронтран таврăнса тракторист пулса ĕçлекен пĕртăвансем Василий Герасимовпа Петр Герасимов юлташсем 1.500 тенкĕ укçа пачĕç. «Тракторист Чувашии» ятлă танк колоннине тума бригада пурĕ 3.500 тенкĕ укçа пачĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Ют çĕршывсенче

Чехословаки правительстви СССР Правительствин заявленийĕ çинчен

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Гитлерла захватчиксем тата вĕсемпе пĕр каварлисем оккупациленĕ çĕршывсенче хăйсем тăвакан тискер ĕçсемшĕн ответлă пулса тăни çинчен Совет Правительстви тунă заявлени пирки Чехословаки правительстви çапла каланă:

«Совет Правительствин заявленине Чехословакин пĕтĕм халăхĕ ырлĕ; Чехословаки халăхĕ хăйĕн кĕрешĕвĕнче тата Германие хирĕç тăрас ĕçре мĕн пур асăл союзниксем, уйрăмах та Совет Союзĕ, ăна кăмăлланине, унăн асапĕсене ăнланнине пĕлсе тăрса хавхаланĕ. Пĕрлешнĕ çĕршывсен пĕрлĕхĕ вĕсем пĕрле çапăçнине кăна мар, вăл тата гражданла халăх пĕр пек асапсем тÿснипе те çуралса вăйлăланнă. Чехословаки правительстви, Чехословаки халăхĕн шухăш-кăмăлĕсене тĕрĕс палăртса тăраканскер, çав халăх ячĕпе çапла калать: вăл совет халăхĕ асап курнине ăнланса ăна питĕ шеллет, хăй унпа тăванла пĕр шухăшлă пулнине каласа парать, Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхне чунтан хĕпĕртесе сăнаса тăрать. Чехословаки правительстви Совет Правительствин заявленине вăрçă вăхăтĕнче тунă усал ĕçсемшĕн наказани парас ыйтăва пĕрлешнĕ çĕршывсем татса парас ĕçре пĕрлĕх тума питĕ кирлĕ утăм пулса тăрать тесе шутлать. Чехословаки правительстви çакна хытă шанса тăрать: иртнĕ вăрçăн йăнăшĕсене тепĕр хут тумăпăр, вăрçă вăхăтĕнче тунă усал ĕçсемшĕн айăплă çынсем тата нацистсен хаяр ĕçĕсене хутшăнса хăйсене хăйсем намăса кăларнă çынсем пĕри те хăйсене тивĕçлипе наказани парассинчен хăтăлса юлаймĕç,—тесе çирĕп шанса тăрать».

Папена „тапăнни" текен ĕçпе йышăннă приговора пăрахăçа кăларнă, çав ĕçе тепĕр хут пăхса тухаççĕ

СТАМБУЛ, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). «Акшам» хаçатăн тата Стамбулри ытти хаçатсен Анкарари корреспонденчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, кассациллĕ суд ĕнер Анкарари уголовнăй судăн Папена «тапăнни» текен ĕçпе йышăннă приговорне пăрахăçа кăларма йышăннă. Кассациллĕ судăн решенине ĕнерех республикăн прокурорне панă. Кассациллĕ суд уголовнăй судăн приговорне çак сăлтавсемпе пăрахăçа кăларма йышăннă: 1) судра Анкарари криминалоги институчĕн эксперчĕ панă рапорта вуласа паман. Павлов судра çав рапорта вуласа пама ыйтнă, çав рапорт вăл бомба мĕнле обстановкăра çуралса кайни çинчен Папен тата обвинительнăй заключени каланине пĕтĕмпех сирсе пăрахать; 2) судра Абдурахманăн малтанхи следствире каланă сăмахĕсене вуласа паман; Павловпа Корнилов вĕсене вуласа пама ыйтнă; 3) суда Итали посольствин швейцарне свидетеле чĕнмен; Павловпа Корнилов çав швейцара свидетеле чĕнме ыйтнă, мĕншĕн тесессĕн вăл бомба çуралса кайнă вырăнтан инçе мар тăнă, вăл бомба çуралса кайсан икĕ çын Итали посольствин территорийĕ тăрăх чупса кайнине курнă; 4) кассациллĕ судăн решенийĕнче тата çакна кăтартса панă: суд хăйĕн решенийĕнче «Омера преступлени тума мĕнле хĕтĕртнине кăтартса паман», тенĕ.

Малтанхи приговора пăрахăçа кăларнă май Анкарари суд Папена «тапăнни» текен ĕçе çывăх вăхăтрах тепĕр хут пăхса тухма тытăнать.

Францири рабочисемпе Виши правительствин полицийĕ хушшинче пулса иртнĕ юнлă тытăçусем

ЖЕНЕВА, октябрĕн 17-мĕшĕ. (ТАСС). Кунта çитнĕ шанчăклă хыпарсем тăрăх, Виши правительстви Франци рабочийĕсене Германире ĕçлеме ирĕксĕр ярас тĕлĕшпе йышăннă мерăсем рабочисем хушшинче вăйлă хумханусем хускатса янă. Францин промышленноçлă пысăк центрĕсенче чылайĕшĕнче çав хумханусем хыççăн забастовкăсем пуçланса кайнă.

Лионра чугунçул мастерскойĕнчи рабочисем забастовка пуçласа янă. Тарб хулинче Пакард, Левашер тата Испано-Сюиз заводсенчи рабочисем забастовка пуçласа янă.

Лион хулинчи забастовка çакăнтан пуçланса кайнă. Октябрĕн 15-мĕшĕнче заводсенче пĕр пĕлтерÿ кăларса çакнă. Çав пĕлтерÿре çапла каланă: рабочисем 48 сехет хушшинче Германие тухса кайма хатĕр пулмалла, тенĕ. Октябрĕн 16-мĕшĕнче ирхине рабочисем заводсен хапхисем умĕнче пуханса тăнă та Лаваль приказне хирĕç тăрасси çинчен сÿтсе-явма пуçланă. Вĕсем тавра халăх пуханса пынă. Пуханнă халăх вĕсем рабочисемпе пĕр шухăш-кăмăллă пулнине уççăнах палăртнă. Рабочисем тата пуханнă халăх тарăхса кайнипе Лаваль политикине хирĕçлесе вăйлă демонстрацисем пуçласа янă. Пырса çитнĕ полици отрячĕсемпе çар чаçĕсем демонстрантсене ручной пулеметсемпе пеме тытăннă. Çав тытăçусенче Лионра 4 çынна вĕлернĕ, 200 çынна амантнă. Амберьте 15 çынна вĕлернĕ, 200 çынна яхăн амантнă.

Виши правительствин полицийĕпе салтакĕсем халăха пени çинчен калакан хыпарсем пĕтĕм Францийĕпе çав тери хăвăрт саралса кайнă. Лионри халăха çавăн пек юн юхтарса хăратма тăнăшăн тарăхнипе Марсельте, Тулузăра, Тарбра, Амберьте тата Францин оккупациленмен зонинчи ытти хуласенче те чылайĕшĕнче демонстрацисем пулса иртнĕ.

Влаçсем хушнипе полици халăх çине провокаци туса пени пĕтĕм Франци çĕршывне питех те вăйлăн хумхантарса янă. Виши правительствин Гавас-ОФИ ятлă официальнăй агентствин ирĕксĕрех çапла каламалла пулнă: демонстрантсене пусарас ĕçе «вырăнти тата тĕпри правительство влаçĕсен хутшăнма лекнĕ», тенĕ вăл.

РУМЫНИРЕ ХАЛĂХ ТАРĂХНИ ÿССЕ ПЫРАТЬ

СТАМБУЛ, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Румыни влаçĕсем Германие тата правительствăна хирĕçле тĕрлĕ выступленисене пусарса лартмашкăн васкаса мерăсем йышăнаççĕ. «Универсул» хаçат çапла пĕлтерет: Антонеску область префекчĕсене халăхăн ÿссе пыракан тарăхăвне пусарса лартма тата саботажпа кĕрешме кирек мĕнле репрессиллĕ мерăсем те йышăнма ирĕк панă.

Антонескун çĕнĕ хаяр мероприятийĕсене тÿрре кăларма тăрăшса, «Аргус» хаçат çапла çырать. «Вăраха кайнă йывăр вăрçă халăх çилленессине ÿстерсе ярать. Çавна пула массăллă психоз (ăс-пуç чирĕ) ÿссе тухать, ăна пусарма татăклă мерăсем йышăнмалла пулать», тет. «Нумайĕшĕ эпир çĕнтерессине ĕненмеççĕ» тесе палăртса, çав хаçат пур румынсене те «калаçса тăмасăр, пăшăлтатмасăр, ыттисене çилентермелле хăтланмасăр» ĕçлеме хушать.

АНГЛИ АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, октябрĕн 16-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, октябрĕн 16-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсен пысăк соединенийĕ Рейн облаçне тапăннă. Бомбăсем пăрахнă вырăнсенчен пĕри Кельн пулнă. Çак операцисенчен мĕнпурĕ 18 бомбардировщик хăйсен базисене таврăнман.

Ĕнер кăнтăрла Англин «Бостон» йышши бомбардировщикĕсем истребительсем хÿтĕлесе пынипе Гаврти доксене икĕ хутчен пырса тапăннă

АНГЛИ АВИАЦИЙĔ ÇУРÇĔР ФРАНЦИЕ ТАПĂННИ

ЛОНДОН, октябрĕн 19-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: октябрĕн 18-мĕшĕнче «Спитфайр» йышши истребительсем Çурçĕр Францири чугунçулсене тата зенитнăй артиллерин батарейисене тапăннă. Англи самолечĕсем хăйсен базисене пĕр çухатусăрах таврăннă.

АМЕРИКА ВОЙСКИСЕМ ЛИБЕРИЕ ПЫНĂ

ЛОНДОН, октябрĕн 18-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Либерин столицине—Монровийăна (Хĕвеланăç Африка) Америка войскисем пынă. Унччен Рузвельтăн представителĕ Либери президенчĕпе Барклейпе нумай вăхăт хушши калаçнă.

Либери хăй пĕрлешнĕ нацисемпе хутшăнни çинчен часах официальнăй йĕркепе пĕлтерĕ тесе шутлаççĕ, тет агентство.

Либери çыранĕнчен 500—600 миля тăршшĕнче курăнакан подводнăй лодкăсемпе кĕрешмешкĕн Либерире сывлăшра патрульлесе çÿреме тытăнаççĕ.

* * *

Либери вăл Гвинея заливĕн хĕрринчи негрсен республики. Унăн лаптăкĕ 95,4 пин квадратлă километр. Халăхĕ пĕр миллион çынна яхăн шутланать. Пĕртен пĕр пысăк порчĕ—Кап-Пальмас. Либерире тропикри вăрмансем нумай.

Либери Дакартан кăнтăртарахра выртать. Нимĕçсем Дакарпа хăйсен подводнăй лодкисен бази вырăнне ытларах та ытларах усă кураççĕ. Çав районра патрульлесе тăни союзниксене тăшманăн флочĕпе кĕрешме пулăшать, вĕсен Добрая Надежда мысĕ патнелле каякан тинĕс çулĕсене хăрушсăрлатать тата Германия Бразили çине тапăнас хăрушлăха чакарать.

Пĕлтерÿ

Октябрĕн 21-мĕшĕнче, каçхине 8 сехетре, ВКП(б) Горкомĕн агитпункчĕн çуртĕнче (Чувашская ур., 6) агитколлективсен руководителĕсен семинарĕ пулса иртет. Семинар çак ыйтупа пулать: «Перекетлĕхшĕн çирĕп кĕрешес тĕлĕшпе тумалли агитациллĕ-масăллă ĕçĕн задачисем тата ăна организацилесси».

Агитколлективсен руководителĕсен пурин те обязательнăй йĕркепе пымалла.

ВКП(б) Горкомĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары. ул. Володарского, 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

НТ 959 Типография №1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.